— Асăрханулларах пулмаллаччĕ те, ачамсем, — терĕ те анне ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ.

Лашана çĕнĕрен кӳлсе килнĕ çулăн çуррине яхăн кайрăмăр. Миххе тупаймарăмăр... Анне вара çĕрĕпех ассăн сывларĕ... çĕрĕпех йĕчĕ...

## ЭСИР КУÇУКА КУРМАН-И?

Йăван мучи урама тухсанах сылтăм ал лаппине куç харши тĕлне тытса тавралла пăхкалать. Куçĕ витĕрех мар унăн. Вăл мечĕкле вылякан ачасенчен ялан çапла ыйтать:

— Эсир Куçука курман-и?

Куçук хăйне евĕр ача. Лара-тăра пĕлмест. Кун каçиччен ăçта кăна çитмест пулĕ! Çуркунне юр ирĕлсе пĕтсенех çара уран чупма тытăнать те мĕн кĕркуннечченех çапла чупать. Çирĕп чун хавалллă вăл. Ăна çут çанталăк пĕр енчен çеç кӳрентернĕ. Мулкачсем вăхăт улшăннă май тĕс улăштарнă пек, çурхи хĕвел хĕртме тытăнсанах Куçукăн шĕвĕркке сăмси тавраш, такам ятарласа кантăр вăрри сапса тухнă пек, кук тĕррипе витĕнет, çӳçĕ кăштах хĕрелет.

— Лайăхрах çăвăнса тасал-ха, ĕнсӳ хыçне çарăк аксан шăтмалла, — тет ăна час-часах мучăшĕ.

Куçук кӳренмест, каланине итлет.

Ял çыннисемшĕн вăл хулари справка бюровĕпе пĕрех. Урампа утса пыракан кашни çын унран лавкка уçă е хупă пулнине, клубра мĕнле кино пулассине ыйтса пĕлме пултарать. Вăл, пĕчĕк пулин те, нумай пĕлме тăрăшать, вĕтĕ сас паллисемпе çырнă кĕнекесем те вулать.

Килте вĕсем виççĕн пурăнаççĕ: мучăшĕ, Куçук тата ватăлса юлхавланнă кушак. Куçука усрава илнĕ. Вăл мучăшне хисеплет. Уйрăмах юмах каланă чух çăвар карсах итлет. Юмаха талăкĕпех итлейместĕн, йăлăхтарать. Урамах тухас килет.

Ача иртенпех пӳлĕмре урлă-пирлĕ уткалать. Çитсе пăлхатман кĕтес юлмасть. Чӳрече патне çĕр хут çитсе пăхнă ĕнтĕ.

— Мучи, кăларсамччĕ урама, — тархаслать вăл çинеçинех.

Мучăшĕн кăмăлĕ хăш чухне çемçелет. Анчах нумай çӳрет-

мест вăл ăна урамра. «Каскăн пулатăн», — тет. Йăлăхтарса çитерсен тин:

— Ну, тасал эппин! — тет.

Куçука çавă çеç кирлĕ. Вăл çавăнтах урама тухса вирхĕнет. Чупнă май каялла çаврăнса пăхать. Мучăшĕ чӳречене уçнă, йăл кулать.

— Нумай çĕтсе ан çӳре, — илтет ача.

Çак самантра çĕр çинче Куçукран савăнăçлăраххи те никам çук тейĕн! Анчах ку савăнăç нумая пымасть. Акă паян та хĕрсех вылятчĕ Куçук ачасемпе урамра.

— Эсир Куçука курман-и? — илтĕнчĕ сасă.

— Эпĕ кунта! — терĕ ача ушкăнран тухса.

— Чĕкеç кума килчĕ. Сана курасшăн, — терĕ мучи.

Чĕкеç кума, чăрăш вутти çатăртатса çуннă евĕр, пĕр вĕçĕмсĕр палкать. Чиркӳре мĕн-мĕн курни-илтни çинчен каласа парать.

Ача ăна кăмăлламасть. Мучипе Чĕкеç кума сĕтел çине сăра лартсах калаçа пуçларĕç.

Хăналансан-хăналансан Чĕкеç кума тытăнчĕ хăйсен ялĕнчи çынсем çинчен калама. Ку пуйрĕ, вăл пуйрĕ тет. Тĕлĕнсех каймалла: кума каланă тăрăх, вĕсен ялĕнче пĕр таса чунлă çын та çук иккен, пурте е вăрласа, е услам туса пуяççĕ.

— Тăхта-ха, Чĕкеç кума, — тӳсеймерĕ Йăван кум, — эсĕ хăçан çынна «çиме» пăрахатăн-ши? Тĕрĕс мар калатăн вĕт.

— Э-э, кум, эсĕ пĕлместĕн-ха, — терĕ хĕремесленнĕ кинемей. — Хăвăр ялти Макçăм Кавĕрли мĕнле пуйнине пĕлместĕн-и? Ăна Турă чăннипех сиплĕ шыв парать тетĕн-и? Çу-у-ук!

Кинемей куçĕ чарăлчĕ, куç хупаххи пĕрмечеленчĕ. Вăл сĕтел хушшинчен тухса кумăшĕ патне тайкаланса пычĕ.

— Пĕлтĕр Кавĕрле пирĕн пата пычĕ. Çавăн чухне ӳсĕрпе персе ячĕ... Сиплĕ шыва Кавĕрле Хĕрлĕçыр таврашĕнче тупать-мĕн. Унта авалтанах киремет çырми пулнă. Усал сывлăш темĕнле хутлатса лартман-ха ăна!..

Куçук кашни сăмаха тимлĕн итлесе ларчĕ. Урама тухсан мĕн пулни-иртнине ачасене каласа пачĕ. Пĕр тапхăр пурте

шăп пулчĕç. Унтан пĕчĕк Ваççа сăмсине нăш тутарса çапла сăмахларĕ:

— Хĕрлĕçырта курăк та ӳсмест теççĕ. Куçук пире чавса тăршшех тыттарать. Унта тумлам шыв та çук пулĕ...

— Ара, эсĕ кайса пăхрăн-и-мĕн?

— Эсĕ анса куртăн-и-мĕн тата?

— Çитсе пăхма шутлатăп, — терĕ Куçук çирĕппĕн.

— Мухтанчăк! — йĕкĕлтерĕ Ваççа. — Çырма тĕпне пысăккисем те анмаççĕ теççĕ. Санран пулать-и?!

— Вăт, курăн, пурпĕрех анатăп!

— Виçĕм çул Тимуксен ĕни шăпах çав çырмара вилнĕ теççĕ, — çинçе сассипе каларĕ Хĕветĕр.

— Ĕлĕк унта çынсем те вилнĕ тет, — шиклĕн сăмах хушрĕ Палля.

— Кам каларĕ?

— Асатте пĕлет.

— Эх, эсир те çав, — терĕ Куçук тӳсеймесĕр. — «Тет» сăмаха ĕненсен çырма çывăхне те пырас çук. Атьăр кайса пăхар.

— Эпĕ пымастăп, — терĕ Палля.

— Эпĕ те...

— Кам манпа пырас тет, кайрăмăр, — сĕнчĕ Куçук.

Ачасем каллех шăпланчĕç, пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç.

— Апла эпĕ пĕчченех каятăп, — терĕ Куçук. Çак самантра унăн сăнĕнче хăюлăх палăрчĕ. Ку таранччен Куçук хăй те Хĕрлĕçыр пирки пĕрре мар илтнĕ. Унта пулас шухăш пуça та килменччĕ. Халĕ ĕнтĕ сăмах панă — утас пулать. Куçук пĕччене нех уй хапхи енне çул тытрĕ.

— Мулкачсем пирĕнтен хăюллăрах пулĕ, — терĕ Петĕр ушкăнран уйрăлса. — Эпĕ Куçукпа пĕрле каятăп.

— Эпĕ те...

Пĕр ушкăн ача Куçука уй хапхинчен тухсанах хуса çитрĕ. Урам варрине Палля çеç тăрса юлчĕ. Вăл хапха еннелле темиçе утăм та туса пăхрĕ, анчах каялла чакрĕ.

Куçукпа тантăшĕсем вăрмана çитрĕç. Сип-симĕс тумпа витĕннĕ йывăççем çинче кайăксем хаваслă юрă шăрантараççĕ. Чечексем çинче пыл хурчĕсем сĕрлеççĕ.

Хĕрлĕçыр ытла та чăнкă çырма, хĕрри йăшсах тăрать. Çавăнпа ачасем çырмана анмалли вырăн шырама тытăнчĕç. Кĕпĕрленсе пыраççĕ çыр хĕррипе.

Сасартăк Коля кăшкăрса ячĕ:

— Пулăшăр!

Пурте каялла çаврăнса тăчĕç. Коля çырмана ӳкнĕ. Вăл пĕр йывăç тымарĕнчен ярса тытма ĕлкĕрнĕ те — çырана çĕклеснесшĕн тапаланать. Кăпăш тăпра ăшĕнчи тымар та тăпăлсах пырать.

Шăв-шав хускалчĕ.

— Тепĕр тымартан тыт!..

— Аллусемпе чавалан!

Куçук шĕшкĕ вуллине кӳлепипе выртса хуçрĕ. Вăрăм патакăн пĕр вĕçне Кольăна тыттарчĕ. Тăрмашсан-тăрмашсан тантăшне хăтарчĕçех.

Çак самантра таçтан хура пĕлĕт капланса килчĕ. Вăйлă çил тухрĕ. Чĕреслетсе çумăр çума пуçларĕ. Ачасене йывăç вуллисем те çумăр шывĕнчен хӳтĕлеймерĕç. Вĕсем пурте ялалла тапса сикрĕç.

— Пĕлетĕр-и, ачасем, Хĕрлĕçыра кайма эпĕ те кăштах шиклентĕм, — терĕ Куçук яла çитсен. — Атьăр сиплĕ шыв çинчен вожатăя каласа парар...

Тепĕр кунне ачасем ушкăнпах тухтăр патне кайрĕç. Тухтăр — отряд вожатăйĕ, волонтер.

Отряд вăрмана кĕрсе Хĕрлĕçыр тăвайккинелле çул тытрĕ. Пурте васкаççĕ, кас-кас чупаççĕ. Çатрака йывăççем утма чăрмантараççĕ. Ачасем ăна-кăна пахмаççĕ, туратсене сирсе малалла талпăнаççĕ.

— Александр Петрович, унта кашкăрсем тапăнмĕç-ши?

— Сасартăк упа сиксе тухсан?

— Хĕрлĕçырăн тĕпĕ çук теççĕ.

— Александр Петрович, мĕнле шутлатăр: сиплĕ шыв пирĕн патра пулма пултарать-ши?..

Вожатăя канлĕх памаççĕ ачасем. Ыйту хыççăн ыйту. Пурне те ăнлантарать Александр Петрович. Юлашки ыйту пирки вăл хăй кăшт иккĕленни сисĕнет.

— Макçăм Кавĕрли вар-хырăм чирĕпе чирленине пĕлетĕп. Сиплĕ шыва хулари аптекăран илсе килет, хăй пек чирлисене çавнах парать тесе шутланă, — тет тухтăр утнă май. — Вăл тухтăрсем патне хулари поликлиникăна çӳрет. Унта тăванĕ ĕçлет.

— Халĕ аптекăри эмелсене те хаклăпа памаççĕ вĕт, — тет пĕчĕк Петĕр. — Макçăм Кавĕрли вара кашни стакан шыва алă пуссăр памасть теççĕ. Мĕншĕн ытла хаклă-ха?

— «Теççĕ» сăмах кăна пуль. Сутăн илекенсем шарламаççĕ, хăй йышăнмасть. Ахальлĕн ăна тахçанах законпа айăпланă пулĕччĕç, — тет ассăн сывласа вожатăй.

— Çăлкуç тупсан Кавĕрле мучин вăрттăнлăхне тинех пĕлетпĕр! — хавхаланать Куçук, тухтăрпа юнашар утаканскер. — Шывран укçа тума вĕреннĕ пулăттăмăр!

— Хальлĕхе эпир кунта сиплĕ шыв пулнине татса калаймастпăр-ха, — тет вожатăй ачасене лăплантарса. — Шыраса пăхар.

Ачасем ик-виçшерĕн уйрăлса тĕрлĕ енне саланчĕç. Тавралăха пăлхатрĕç. Хĕрлĕçыр таврашĕнче пĕр хушă ача сасси çеç янăраса тăчĕ. Çитмен вырăн юлмарĕ. Шурлăхри виçĕ вырăнтан шыв илсе кĕленчесене тултарчĕç. Çăлкуç тупăнмарĕ.

Александр Петрович тĕрлĕ вырăнти шыва танлаштарса пăхрĕ. Ăна пурте куç илмесĕр сăнарĕç, паллах, татăклă сăмах кĕтрĕç. Тухтăр чĕнмерĕ, темшĕн шухăша путрĕ.

Çывăхрах Куçук сасси янăрарĕ:

— Александр Петрович, кунта... кунта килĕр-ха!

Пурте сасă илтĕннĕ енне васкарĕç.

Куçук çыранти ватă юман турачĕ çине улăхса ларнă. Вăрман çурăласла кăшкăрать.

— Вĕрен!.. Вĕрен тупрăм!

— Çĕре пăрах! — хавхаланчĕ вожатăй.

— Унăн пĕр вĕçне юман вуллинчен çыхнă!

— Апла пăрах!

Сӳс вĕрен çĕре шаплатса ӳкрĕ, çулçăсене пăлхатса вĕçтерчĕ.

— Ачасем, куратăр-и, çыран хĕрри пĕр тĕлте ытларах тĕпренсе ишĕлнĕ, — терĕ тухтăр вĕренĕн пĕр вĕçĕпе пилĕкĕнчен çыхăнса.

— Сиплĕ шыв темĕн тесен те ҫырмара! — кăшкăрать Куҫук.

— Эпĕ вĕрен салтăнасран сыхласа ларатăп. Хăвăртрах анăр ҫырмана!

Пурте ҫыран хĕрне кĕшĕлтетсе пухăнчĕҫ. Тухтăр чăнкă ҫырантан аялалла шуса анчĕ. Ачасем малалла мĕн пуласса кĕтрĕҫ.

Чылай кĕтмелле пулчĕ.

— Унта шыв мар, лачака та пулас ҫук, — тет пĕри.

— Эсĕ анса куртăн-и? — тет тепри.

Ҫатрака йывăҫсем хускалчĕҫ. Кĕҫех вĕрентен уртăнса хăпаракан Александр Петрович курăнчĕ. Ҫырана хăпарсан тухтăр спорт сумкинчен пластмассăран тунă фляга кăларса кăтартрĕ. Шыв чăшăлтатса шăмпăлтатрĕ.

— Ур-ра! Сиплĕ шыв!.. — кăшкăрма тытăнчĕҫ ачасем пĕр харăс.

— Савăнма иртерех-ха. Ҫырма тĕпĕнче чăннипех ҫăлкуҫ пур, анчах анализ тумасăр шыв сиплĕхне пĕлме ҫук, — терĕ тухтăр.

— Вĕрене кам ҫыхса хăварнă-ха тата? — ĕненесшĕн пулмарĕ Куҫук. — Кирек мĕн калăр та, Кавĕрле мучи сиплĕ шыв патне ҫак вĕренпе аннă...

Яла ҫитсен тухтăр тӳрех Кавĕрле мучи патне кайнă. Мучи: «Нимĕнле ҫăлкуҫ та, вĕрен те курман», — тесе ҫеҫ хуравланă.

Ачасем Александр Петрович хуларан таврăнасса икĕ кун кĕтрĕҫ. Ҫĕнĕ хыпар пĕтĕм яла сарăлчĕ. Пурте сиплĕ шыв ҫинчен калаҫрĕҫ. Сăмах Кавĕрле мучи килне темиҫе хут ҫитрĕ. Старик темшĕн урама тухса курăнми пулчĕ. Ялан юмах ҫаптараканскер, чĕмсĕрленчĕ. Тахăшĕ ăна ҫĕрле ҫеҫ Хĕрлĕҫыр еннелле кайнине асăрханă. Куҫук мучи хыҫҫăн йĕрлеме тӳр килменшĕн пăшăрханчĕ.

Хĕвел тӳпене улăхса ял ҫийĕн ҫап-ҫутă шевле сапса тăчĕ. Шăрăх. Ачасем ҫара урисемпе больница умĕнче тăпăртатса тăраҫҫĕ. Вĕри тусан кăмакари кĕл пекех пĕҫертет. Александр Петровича кĕтсе илеймесĕр ачасем ушкăнпах уй хапхи еннелле чавтарчĕҫ. Мĕн чухлĕ машина, лав уҫса кĕртмерĕҫ пулĕ вĕсем хапхаран, тухтăра ҫав-ҫавах кĕтсе илеймерĕҫ.

Вăхăт каç енне сулăнсан больница умне васкавлă пулăшу машини çитсе чарăнчĕ. Машинăран Александр Петровичпа пĕрле килнĕ икĕ çын тухма çеç ĕлкĕрчĕç, такам хыпарланă пек, вĕсене çийĕнчех ачасем сырса илчĕç.

— Эпир сире кунĕпех кĕтрĕмĕр. Ну, мĕнле? — тухтăра алăран тытса туртрĕ Куçук.

— Маттур эсĕ, Куçук, — терĕ Александр Петрович ачана çурăмран лăпкаса. — Çăлкуçĕнче чăннипех сиплĕ шыв. Вархырăмпа аптăракан хăш-пĕр çынсемшĕн вăл Кавказри минерал шывĕ пекех усăллă.

— Ур-ра! — кăшкăрма пуçларĕç ачасем.

Сасă илтсе больница умне ватă мучисемпе кинемейсем, çамрăк çынсем пухăнчĕç. Ушкăнра Макçăм Кавĕрли кăна курăнмарĕ. Хыпар пурне те тĕлĕнтерчĕ. Хуларан килнĕ тухтăрсем ватăсенчен Хĕрлĕçыр таврашĕнчи çырма-çатра çинчен ыйтса пĕлчĕç. Тĕплĕн калама пултаракан тупăнмарĕ. Хăшĕпĕри хăйĕн тăван вырăнне сахал пĕлнишĕн пăшăрханса калаçрĕ.

— Эпир çав вырăнсене тĕпчесе пĕлме килтĕмĕр те, — савăнăçлăн пĕлтерчĕ хуларан килнĕ хăна. — Ку тĕлĕшпе пире Куçукпа унăн юлташĕсем пулăшрĕç.

Хăна кĕсйинчен хĕрлĕ хĕрес ӳкернĕ значок кăларса Куçук кăкри çумне çирĕплетрĕ. Ачасем çеç мар, çитĕннисем те ăмсанса пăхрĕç значок çине. Куçук хăй çеç именсе тăчĕ: тусанланнă сăн-пичĕпе аллисем канлĕх памарĕç ăна.

Кун хыççăн кун, эрне, уйăх иртрĕ. Хĕрлĕçыр таврашне хуларан килнисем тĕплĕн тĕпчерĕç. Çырма тĕпне Куçукпа тантăшĕсем те анса курчĕç. Хăрушши, шикленмелли нимĕн те пулмарĕ унта.

Куçук тупнă çăлкуç çинчен хаçатра та çырчĕç. Çăлкуçне те ун ятнех панă тенĕччĕ унта. Халĕ Хĕрлĕçыр таврашĕнчи вăрманта кану çурчĕ пулмалла тесе те калаçаççĕ.

Пирĕн таврара Куçук çинчен ачасем çеç мар, ваттисем те аван пĕлеççĕ.

Яла пырса çӳрекенсенчен кашниех халĕ:

— Эсир Куçука курман-и? — тесе ыйтать.